# Тĕрлеме-çыхма ăста

**Елена Семеновна Альгешкина Кив Атикасси ялĕнче 1957 çулта çуралнă. Ача чухнех вăл ал ĕçĕпе аппаланма юратнă. 1975 çултан тытăнса «Паха тĕрĕ» фабрикăн районти филиалĕнче вунсакăр çул ĕçленĕ. Кĕскен калас-тăк, мĕн хупăниччен унта хитре чăваш эрешĕсене тĕрленĕ.**

Унтан шăпа Елена Семеновнăна Хĕрлĕ Чутай шкулне илсе çитернĕ. Кунта вăл çирĕм çул ытла тирпейлӳçĕре вăй хунă, тивĕçлĕ канăва тухсан та ĕçленĕ. Унтан пĕр хушă «Хастар» физкультурăпа спорт комплексĕнче гардеробщицăра тăрăшнă вăл. Елена Альгешкинан пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ – хĕрĕх çул ытла, çавăнпах «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ята та тивĕç пулнă вăл.

Пĕр çыхма-тĕрлеме хăнăхнă ăста алăсем ĕççĕр лараймаççĕ. Елена Семеновна палăртнă тăрăх, утăçипе анкарти ĕçĕсенчен пушансанах ал ĕçне пикенет: вăл тĕрлĕ япала çыхма та, хĕреспе е ӳкерчĕке тултарса (гладью) тата чăваш тĕррисене тĕрлеме те кăмăллать. Чăваш кĕписем, алшăллисем е ытти япала тĕрлени те сахал мар пулнă унăн. Тĕрленĕ чылай ӳкерчĕк те илем кӳрет килĕнче. Пĕлĕшĕсем тĕрлесе пама ыйтсан вара нихăçан та хирĕçлеменнине, хаваспах пулăшнине пытармасть тĕрĕ ăсти.

Мăшăрĕпе Елена Альгешкина икĕ ывăл çуратса ӳстернĕ, анлă пурнăç çулĕ çине кăларнă. Халĕ вĕсем те çемьеллĕ ĕнтĕ. Елена Семеновнăн пурĕ тăватă мăнук. Хăйĕн ăсталăхне кама парса хăвармалли пурах темелле. Сăмахран, Надя кинĕн те тĕрлес туртăмĕ пур, алла хавасплах йĕппе çип тытать. Украинăра пурăнакан йăмăкĕ те тĕрленине пĕлтерет Елена Альгешкина.

«Тĕрлесе «Сурпан Пĕрле» акцие хутшăнма районти нумай функциллĕ культура центрĕнче тăрăшакансем ыйтрĕç. Килĕшрĕм, тĕрлесе патăм. Унтан культура çуртĕнче ĕçлекенсемпе тĕлпулăва та хутшăнтăм. Тĕп хуламăрта иртекен Чăваш тĕррин кунне халалланă уява та йыхравларĕç, анчах та унта, шел те, каяймарăм. Вăхăт тупăнсанах культура çуртĕнче тимлекен пикесене хăйсем чĕннипе тĕрлес вăрттăнлăхсемпе паллаштарма каясшăн», – тет Елена Семеновна.

Мăшăрĕ пурнăçран уйрăлнă хыççăн пĕчченех пурăнать пулин те Елена Альгешкина пуçне усмасть, малтанхи пекех çивĕч те вăр-вар. Ачисем çывăхра тĕпленнĕрен амăшĕ патне час-часах килсе çӳреççĕ, тунсăхлама памаççĕ, пулăшсах тăраççĕ. Картишĕнче те выльăх тулли маттур хĕрарăмăн. Апла пулин те вăл ал ĕçĕпе аппаланма, ачисемпе мăнукĕсене кăпăш та тутлă кукăльпе сăйлама та вăхăт тупать. Вĕсемшĕнех пурăнать, çунать çав амăшĕн чĕри...

**Н.МИДАКОВА.**

